27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
ИЮНЬ
20
ЫТЛАРИКУН
121(6616) №

# Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

## Информациллӗ пӗлтерӳ

Июнӗн 16—18-мӗшӗсенче ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн XIX пленумӗ пулса иртрӗ. Пленум ҫак ыйтусене сӳтсе-яврӗ:

1. Ҫураки итогӗсем, тырӑ калчисене пӑхасси тата 1944 ҫулта тырпула пухса кӗртме хатӗрленесси ҫинчен (докладчик—Чӑваш АССР Совнаркомӗн Председателӗ **Матвеев** юлташ).
2. Республикӑри промышленноҫпа транспорт 1943 ҫулта тата 1944 ҫулӑн малтанхи 5 уйӑхӗнче мӗнле ӗҫлени ҫинчен (докладчик—ВКП(б) Обком секретарӗн оборона промышленноҫӗ енӗпе ӗҫлекен заместителӗ **Крылов** юлташ).
3. Колхозсенче общественнӑй выльӑх-чӗрлӗх йышне сыхласа хӑварасси тата ӑна малалла ӳстерсе пырасси ҫинчен (докладчик—ВКП(б) Обком секретарӗн выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес енӗпе ӗҫлекен заместителӗ **Мартынов** юлташ).
4. Организациллӗ ыйтусем.

Пур ыйтусемпе те тивӗҫлӗ решенисем йышӑннӑ.

Пленум ВКП(б) Обкомӗн пропагандӑпа агитаци енӗпе ӗҫлекен секретарне **И. К. Иванов** юлташа ВКП(б) Обкомӗн бюро составне кӗртрӗ.

## Вайлӑ тырпулшӑн пыракан кӗрешӳри боевой задачӑсем

ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн ҫак кунсенче пулса иртнӗ XIX-мӗш пленумӗ ҫураки итогӗсем, тырӑ калчисене пӑхасси тата 1944 ҫулта тырпула пухса кӗртме хатӗрленесси ҫинчен Чӑваш АССР Совнаркомӗн Председателӗ А. М. Матвеев юлташ тунӑ доклада сӳтсе-яврӗ. [illegible]

[illegible]

Нумай районсен руководителӗсем ҫӗрулми лартассине, выльӑх апачӗ валли акакан культурӑсене тата техникӑллӑ культурӑсене акассине тивӗҫлӗ сӑк пӑхмарӗҫ, ҫавӑнпа та ҫак енӗпе государство планне пӑсрӗҫ. Ҫавна пула республика ҫӗрулмипе техникӑллӑ культурӑсем, выльӑх апачӗ валли курӑксемпе тымар-ҫимӗҫсем акмалли плана чылай пурнӑҫлаймарӗ.

Пленум ҫакӑнта пӗрлех республикӑра калчасене пӑхса ҫитӗнтерес, пӗрхи ҫӗртме тӑвас тата уборкӑна хатӗрленес ӗҫсем начар ҫителӗксӗр пынине палӑртрӗ.

Пленум парти райкомӗсене, райсовет исполкомӗсене, ҫӗрӗҫ органӗсемпе колхозсен правленийӗсене ӗҫри ҫитменлӗхсене хӑвӑрт пӗтерме хушрӗ. ВКП(б) райкомӗсемпе райисполкомсен районри партипе совет тата колхоз активӗн пухӑвӗсенче, колхозниксен аслӑ пухӑвӗсенче ҫураки итогӗсене тӗплӗн сӳтсе-явмалла, кашни колхоз ҫуракинче мӗнле ӗҫленине пӑхса тухса хакламалла, калчасене пӑхас, ҫӗртме тӑвас, тырпулсене пухса кӗртме тата государствӑна ялхуҫалӑх продукчӗсем

Тырӑ йышӑнмалли государство склачӗсене юсаса хатӗрлес ӗҫсем те начар-ха. Пленум Заготзерно, Торгплодоовощьтрест, Чӑвашсоюз тата ытти хатӗрлев организацийӗсен руководителӗсене ҫӗнӗ тырра йышӑнма складсем хатӗрлеме, ку ӗҫе июлӗн 15-мӗшӗнчен кая юлмасӑр туса пӗтерме хушрӗ.

ВКП(б) Обкомӗн XIX-мӗш пленумӗ партипе комсомол организацийӗсене, колхозниксемпе колхозницӑсене, МТС-семпе совхозсен работникӗсене социализмлӑ ӑмӑртӑва талах та анлӑрах сарса, калчасене пӑхса тӑрассине большевикла организацилеме тата уборкӑна кӑтартуллӑн хатӗрленсе ҫитме чӗнчӗ. Республикӑри колхозниксемпе колхозницӑсем, МТС-семпе совхозсен работникӗсем ҫак чӗнӗве хапӑлласах йышӑнӗҫ, ҫӗнтерӳ тырпулне вӑхӑтра пухса кӗртсе, Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртура малти вырӑна тухассишӗн, Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне республика аллинчех ҫавӑрассишӗн вӑя хӗрхенмесӗр кӗрешӗҫ.

## Ҫураки итогӗсемпе пирӗн умра тӑракан задачӑсем

### Чӑваш АССР Совнаркомӗн Председателӗ А. М. Матвеев юлташ ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн XIX-мӗш пленумӗнче тунӑ докладран

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ 1944 ҫулхи ялхуҫалӑх ӗҫӗсен планӗ ҫинчен йышӑннӑ постановлени [illegible]

[illegible]

палӑртса хӑвармалла. ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ 1944 ҫулхи апрелӗн 29-мӗшӗнче йышӑннӑ решенипе палӑртнӑ ҫуракин малтанхи кунӗсенчи ҫитменлӗхсене тӗплӗн шута илсе, ВКП(б) райкомӗпе райсовет исполкомӗ ҫав ҫитменлӗхсене хӑвӑрттӑн пӗтерме

пултарчӗҫ, ҫураки ӗҫне кулленех оперативно ертсе пычӗҫ, уйрӑм колхозсен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене пӗтерессишӗн тимлӗн тӑрӑшрӗҫ, кая юлса пыракан колхозсене ҫийӗнчех пулӑшма пултарчӗҫ. Ҫаксене пула, район, ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ постановлени хыҫҫӑн кӗске вӑхӑтрах ӗҫсене ӳстерчӗ те, майӑн 28-мӗшӗ тӗлне республикӑра пуринчен малтан ӗҫсен государство планне тултарчӗ.

Анчах та пӗтӗм республикипе илсен, ҫураки хӑвӑртлӑхӗсем ҫителӗклӗ теме ҫук. Эпир лайӑхрах ӗҫлеме, ҫуракине хӑвӑртрах вӗҫлеме пултарнӑ. Республика кая юлса пыракан Кувакино, Пӑрачкав, Шӑмӑршӑ, Хӗрлӗ Чутай, Чкаловски, Улатӑр, Йӗпреҫ, Комсомольски, Первомайски, Сӗмӗрле районӗсем начар ӗҫленинчен килет. Ҫураки ӗҫӗсене Советски тата Тӑвай районӗсем те вӑраха хӑварчӗҫ.

Кая юлса пыракан районсемпе колхозсене государство вӑрлӑхӗсем, туртӑм вӑйӗ парса пысӑккӑн пулӑшрӗ. Кувакино районӗнчи колхозсем кӑҫал [illegible] тата ытти районсенчен 2980 центнер, Шӑмӑршӑ районӗ 4.855 центнер, Пӑрачкав районӗ 4.438 центнер вӑрлӑх илнӗ. Унсӑр пуҫне Кувакинӑпа Шӑмӑршӑ районӗсене ытти районсем [illegible] лаша янӑ. МТС-сене ҫирӗплетсе тӑнине те пысӑк ӗҫсене пурнӑҫа кӗртнӗ. Кувакинӑпа Пӑрачкав районӗсен МТС-сене икӗ пая уйӑрса пӗчӗклетрӗҫ, вӗсем валли кадрсем суйласа илнӗ, вӗсене хайсемпе горючи ытларах панӑ. Анчах ҫапла пулин те, Кувакино, Шӑмӑршӑ, Пӑрачкав тата ытти кая юлса пыракан районсен руководителӗсем, хӑйсен [illegible] усӑ курса, колхозниксене, [illegible] ҫӗнтерме, ҫуракие вӑхӑтра ирттерме мобилизацилеме пултараймарӗҫ. Советскипе Тӑвай районӗсен ӗҫӗнчи пысӑк ҫитменлӗхсем [illegible] шутӑра выльӑхсене хак- [illegible] туртӑм вӑйӗ выранӗнче [illegible] курни пулать. Ҫакӑ ва- [illegible] районсенче ҫураки ӗҫӗсем вӑраха [illegible] илсе пычӗ.

[illegible] июнӗн 10-мӗшӗ тӗлне ҫур- [illegible] акмалли плана 100,1 процент [illegible]. Ҫак вӑхӑт тӗлне ҫуркунне [illegible]лӗ тырӑсене 100,9 процент [illegible] пучахлӑ тырӑсем [illegible]) акнӑ, ҫӗрулми — 84,9 [illegible] пахча-ҫимӗҫсем — 87,4 процент, [illegible] — 89,3 процент, йӗтӗн — [illegible] махорка—43,0 процент, [illegible] ӳсекен курӑксем—127,1 [illegible] кӑшманӗсемпе силос ту- [illegible]рӑсем — 83,6 процент, нумай ҫул хушши ӳсекен курӑксем — 43,5 процент акнӑ.

Ку цифрӑсенчен ҫакӑ курӑнса тӑрать: эпир ҫуртыррисене, уйрӑмӑнах пучахлӑ тырӑсене акмалли пӗтӗм плана ӑнӑҫлӑн тултарса пынӑ вӑхӑтрах, ҫӗрулми лар-

тас тата уйрӑмӑнах техникӑллӑ культурӑсемпе нумай ҫул ӳсекен курӑксене акас енӗпе плана тултараймарӑмӑр. Техникӑллӑ культурӑсемпе нумай ҫул хушши ӳсекен курӑксем акмалли плана тултарманни ҫав культурӑсем вӑрҫӑпа хуҫалӑх тӗлӗшӗнчен пысӑк вырӑнта тӑнине ӑнланса илменнинчен тата вӗсене хакламаннинчен килнӗ. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ йӗтӗн акмалли плана июнӗн 15-мӗшӗ тӗлне Улатӑр районӗнче 16 процент, Хӗрлӗ Чутай районӗнче 21 процент, Первомайски районра 29 процент ҫеҫ тултарнӑ тата ытти те. Республикӑра махорка лартасси питех те ҫителӗксӗр пырать. Техникӑллӑ культурӑсем акса тӑвас ӗҫ ҫине ҫавӑн пек ответсӑррӑн пӑхнине татӑклӑн пӗтермелле.

Юхашки ҫулсенче выльӑх апачӗсем акса тӑвас ӗҫ ҫине ҫителӗксӗр ҫавӑрӑнса пӑхни сисӗнет. Ҫавна пула вӑл культурӑсене акса тӑвасси, 1942 ҫултан пуҫласа, ҫулсеренех чакса пырать. Ҫакӑ вӑл пирӗн колхозсен выльӑх апачӗсен базине сиен кӳрет. Хӗрлӗ Чутай, Ишлей, Элӗк, Сӗмӗрле, Канаш тата ытти чылай районсенче кӗсвер акмалли плана кӑҫал та тултарман. Ҫав районсен руководителӗсем выльӑх-чӗрлӗх апачӗ валли акакан культурӑсене хакламанни колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе ҫав тери пысӑк сиен кӳнине ӑнланса илме вӑхӑт ӗнтӗ. Вӗсен колхозниксене выльӑх-чӗрлӗх апачӗсен базине тума мобилизацилемелле.

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ йышӑннӑ решение пӑхӑнса ӗҫлесе, кӑҫалхи ҫуракинче нумай колхозсем агротехникӑна тӗрӗс пурнӑҫа кӗртессишӗн ҫине тӑрса кӗрешрӗҫ. Пӗтӗм республика тӑрӑх илсен те, ӗҫӗн пахалӑхӗ

1943 ҫулхинчен лайӑхрах пулчӗ. Колхозсенчен нумайӗшӗсем тырпулсене пусусаврӑнӑшне пӑхӑнса тунӑ плансем тӑрӑх акса хӑварчӗҫ. Пӗрчӗллӗ тырӑсене яровизацилесе акмалли плана 127 процент тултарнӑ. Ку вӑл иртнӗ ҫулхинчен 31 процент ытларах шутланать. Пӗрчӗллӗ тырӑсем акмалли пӗтӗм ҫӗр лаптӑкӗнчен 43 процентне сеялкӑсемпе акса хӑварнӑ.

Анчах та хӑшпӗр районсенчи уйрӑм колхозсенче агротехникӑна пӑснисем: ӑшӑх сухаласа, хӑмӑл ҫине акни, кондицие ларман тата имҫамсемпе чӳхемен вӑрлӑхсемпе усӑ курни, вӑрлӑхсем акмалли нормӑна чакарни тата ыттисем те пулнӑ. Ҫураки пахалӑхӗ тата агротехникӑллӑ мероприятисене пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе ӗҫсем пуринчен ытларах ҫуракине ҫителӗксӗр хӑвӑртлӑхсемпе ирттернӗ районсенче начар тӑрассӗ. Сӑмахран, Шӑмӑршӑ районӗнче пӗрчӗллӗ тырӑсем акнӑ пӗтӗм ҫӗр лаптӑкӗнчен 19 процентне кӑна сеялкӑсемпе акнӑ, яровизацилесе акмалли плана 61 процент ҫеҫ тултарнӑ, ҫӗре начар ҫемҫетнӗ, вӑрлӑхсен пахалӑхӗ те янӑх пулнӑ. Агротехникӑна тӗрӗс пурнӑҫа кӗртессишӗн Пӑрачкав, Кувакино, Первомайски, Йӗпреҫ, Ишлей тата ытти чылай районсенче те тивӗҫлипе кӗрешмен. Асӑннӑ районсен руководителӗсенчен ҫакна ыйтас килет: мӗн ҫине шанса тӑрассӗ-ха вӗсем, колхозсен тата колхозниксен экономикӑллӑ шайне мӗнле ҫӗклеме шутлассӗ? Тухӑҫлӑ тырпул туса илессишӗн кӗрешменни унта аякран пулӑшасси ҫине шанса тӑрас йӑла хытӑ сарӑлнине кӑтартса парать. Ун пек йӑлапа татӑклӑнах пӗтермелле, ӗҫре брак тунине, агротехникӑна пурнӑҫа кӗртменнине тӳсмелле мар.

### МТС-сен ӖҪӖСЕМ ҪИНЧЕН

Кӑҫал машинно-тракторнӑй станцисем ҫуракинче иртнӗ ҫулхинчен чылай лайӑхрах ӗҫлерӗҫ. Тракторсемпе ҫураки вӑхӑтӗнче тумалли ӗҫсен планне пӗтӗм республика тӑрӑх июнӗн 10-мӗшӗ тӗлне 116,7 процент тултарнӑ. Республикӑри 29 МТС-ран 24-шӗ, 350 тракторнӑй бригадӑран 287-шӗ хӑйсен ҫураки планне ӑнӑҫлӑн е тата ирттерсе тултарнӑ. Ҫураки вӑхӑтӗнче уйрӑмӑнах Шӑхасан, Йӗпреҫ, Сӗрпӳ, Красноармейски, Вӑрнар тата Чкаловски МТС-ӗсем лайӑх ӗҫлерӗҫ. Шӑхасан МТС-ӗ сурхи ӗҫсен планне. июнӗн 10-мӗшӗ тӗлне 155 процент тултарнӑ, 3.900 килограмм горючи перекетленӗ. Районри 80 трактористран 76-шӗ хӑйсен заданийӗсене ӑнӑҫлӑн е ирттерсе тултарнӑ.

Иртнӗ вӑхӑтсенче кая юлса пынӑ Сӗрпӳ, Красноармейски, Сӗнтӗрвӑрри, Куславкка, Етӗрне, Сӗнтӗр тата Первомайски МТС-ӗсем те кӑҫал хӑйсен планне ӑнӑҫлӑн тата ирттерсе тултарни ҫинчен каласа сӑр иртсе кайма ҫук. Красноармейскипе Сӗрпӳ МТС-ӗсем хӑйсен планӗсене пурнӑ-

чен малтан пурнӑҫа кӗртнӗ. 13 МТС крассин тата бензин чылай перекетленӗ. Уйрӑмӑн илсен ҫураки вӑхӑтӗнче Елчӗк МТС-ӗ 19.000 килограмм, Сӗрпӳ МТС-ӗ 7.100 килограмм, Вӑрнар, МТС-ӗ 5.500 килограмм горючи перекетленӗ.

Малта пыракан МТС-сем ҫав ҫитӗнӳсене вӗсен руководителӗсем, парти райкомӗсемпе райсовет исполкомӗсем пулӑшса пынипе, трактор паркне, тракторсем хыҫҫӑн кӑкарса ӗҫлемелли инвентаре тӗплӗн хатӗрленипе тата трактористсемпе вӗсене пулӑшнӑ ҫӗрте ӗҫлекен кадрсене пӗлсе суйласа илнипе, вӗсене тӗплӗн вӗрентнипе тума пултарчӗҫ.

Асӑннӑ МТС-сен директорӗсем тракторсене пӗр чарӑнмасӑр ӗҫлеттерме, вӑйсене тӗрӗс вырнаҫтарса тухма, ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетме, трактористсене техника тӗлӗшӗнчен лайӑх пулӑшса тӑрассине организацилеме пултарнӑ. Республикӑри малта пыракан МТС-сенчи трактористсем тракторсене техника тӗлӗшӗнчен лайӑх

(Вӗҫӗ 2-мӗш страницӑра)

# Совет Информаци Бюровӗнчен

## ИЮНӖН 17-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

**Июнӗн 17-мӗшӗнче КАРЕЛИ перешеекӗнче пирӗн ҫарсем, наступление малалла ӑнӑҫлӑ вӑйлатса пырса, халӑх пурӑнакан 120 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра МАЯКАНМЯКИ, ЭТУКЮЛЯ, ТАРККАЛА, КАРЬЯЛАЙНЕН, ТОММИЛА, ХАЛИЛА, ВАРПУЛИЛА, КАУКЯРВАНКЮЛЯ, ПЕРКЯРВИ, РИХИСЮРЬЯ, ВУОТТА, РАСУЛИ, ПАЛКЕВАЛА, РИКОЛА, КОСЕЛА ятлӑ ялсем тата КОУЛЕМАЯРВИ, ПЕРКЯРВИ тата РАСУЛИ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.**

**Фронтӑн ытти участокӗсенче улшӑнусем пулман.**

**Июнӗн 16-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 17 самолетне персе ӳкернӗ.**

## ИЮНӖН 18-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

**Июнӗн 18-мӗшӗнче КАРЕЛИ перешеекӗнче ЛЕНИНГРАД фрончӗн ҫарӗсем, артиллерипе авиаци хӑватлӑн пыра-пыра ҫапса пулӑшса тӑнине пула, пехотӑпа танксем ҫав тери хӑвӑрт наступлени тунӑ хыҫҫӑн, финсен оборонин виҫҫӗмӗш линине—Маннергейм линине МУРИЛА, ИЛЯКИРЙОЛА районӗсенче татнӑ, ВЫБОРГ хули еннелле наступлени туса пырса, Ленинград облаҫӗнчи район центрне — БЬЕРКЭ (КОЙВИСТО) хулине портне туртса илнӗ.**

**Фронт ҫарӗсем, наступлени туса пырса, халӑх пурӑнакан 100 пункта ытла йышӑннӑ, вӑл шутра — Ленинград облаҫӗнчи РАУТУ ятлӑ район центрӗ тата ПЕНТТИЛЯ, КОТТЕРЛАХТИ, ЛАХТЕНМЯКИ, МАНСЛАХДЕНКЮЛЯ (ВЫБОРГ хулинчен 28 километр кӑнтӑртарахра), КОЛККАЛА, ХИЕТАНЕН, ПИСКАЛА, СИПРОЛА, ПАРККИЛА, ПИХЛАЙНЕН, ТЕЛККЯЛЯ, ВАЛКЯРВИ, НОУСИАЛА, ОРАВАНИЕМИ, ЛИПОЛА, ПУРМИЯРВИ, ВАСКЕЛА ятлӑ пысӑк ялсем тата ХУМАЛЙОКИ, ЛАУХТЕНМЯКИ, ВАЛТЕРВИ, РАУТУ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.**

**Фронтӑн ытти участокӗсенче улшӑнусем пулман.**

**Июнӗн 17-мӗшӗнче сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 24 самолетне персе ӳкернӗ.**

☆ ☆ ☆

### ПИРӖН АВИАЦИ ТӐШМАН АЭРОДРОМӖСЕНЕ ПЫРА-ПЫРА ҪАПНИ

Июнӗн 18-мӗшӗ ырҫан тенӗ чух ҫӗрле пирӗн инҫене вӗҫекен авиаци, йышлӑн вӗҫе-вӗҫе кайса, тӑшманӑн **Барановичи, Пинск, Минск** районӗсенчи аэродромӗсене пыра-пыра ҫапнӑ. Бомбӑсем пӑрахнипе пула аэродромсенче пушарсем нумай тухнӑ. Пушарсенче взрывсем пулнӑ. Самолетсем, боеприпас склачӗсем тата горючи ҫуннӑ. Нимӗҫсен самолечӗсене нумай пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ.

Пирӗн пӗр самолет хӑйӗн базине таврӑнман.

☆ ☆ ☆

Карели перешеекӗнче Ленинград фрончӗн ҫарӗсем, ҫав тери хӑвӑрт пырса ҫапса, Мурила, Илякирйола районӗсенче финсен оборонин виҫҫӗмӗш линине—Маннергейм линине—татнӑ, Бьеркэ (Койвисто) хулине портне штурмласа туртса илнӗ. Наступление малалла вӑйлатса пырса, пирӗн ҫарсем Ленинград облаҫӗнчи Рауту район центрне туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 100 пункта ытла йышӑннӑ. Пирӗн ҫарсен наступленине артиллерипе авиаци татти-сыпписӗр пулӑшса пырассӗ, хӑватлӑн пыра-пыра ҫапса, вӗсем пехотӑпа танксене ҫул тасатса парассӗ. Тӑшманӑн ҫӗмӗрсе тӑкнӑ чаҫӗсем совет ҫарӗсем пыра-пыра ҫапнипе каялла чакассӗ, сынсемпе техника тӗлӗшӗнчен пысӑк ҫухатусем тӳсессӗ. Пӗр чаҫри боецсем финсен икӗ батальонне пӗтерсе тӑкнӑ, ҫар хатӗрӗсем турттарса пыракан чугун ҫул эшелонне тытса илнӗ. Финсене тыткӑна нумай илнӗ. Тепӗр участокра пӗр соединени финсен пехотин пӗр полкне аркатса тӑкнӑ, 36 тупӑ, 80 пулемет тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ.

Хӗрлӗ Ҫар боецӗсемпе офицерӗсем Карели перешеекӗнче пыракан ҫапӑҫусенче хӑюлӑхпа геройлӑх кӑтартассӗ. Гварди старши лейтенанчӗ Грюченко ертсе пыракан хӑйӗ тӗллӗн ҫӳрекен тупӑ экипажӗ пехота валли ҫул тасатнӑ чухне тӑшманӑн 3 дзотне, йывӑр минометсен батарейине пӗтерсе тӑкнӑ тата тӑшман пехотин 2 взводне вӗлерсе пӗтернӗ. Пирӗн 5 разведчик тӑшман тылне кӗрсе кайнӑ та 4 салтака тата пӗр офицера (финсен армийӗн майорне) тыткӑна илнӗ. Лисицынпа Мищенко кӗҫӗн сержантсем тӑшманӑн виҫӗ амбразуралӑ дзотне сирпӗнтерсе янӑ, унӑн хирӗҫ тӑнӑ гарнизонне пӗтӗмӗшпех пӗтерсе тӑкнӑ.

Пирӗн авиаци, икӗ хутчен йышлӑн вӗҫсе кайса, Выборг чугун ҫул узелне пыра-пыра ҫапнӑ. Бомбӑсем пӑрахнипе пула 3 паровоз, 200 вагонпа платформӑна ҫити ҫӗмӗрӗлсе пӗтнӗ, 6 склад сирпӗнсе кайнӑ, чугун ҫул линийӗ темӗн тӑршшӗ ишӗлсе пӗтнӗ. Узел территорийӗнче пушарсем тухнӑ, пушарсенче вӑйлӑ взрывсем пулнӑ.

Сывлӑшри ҫапӑҫусенче совет летчикӗсем тӑшманӑн 19 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Витебск хулинчен сурҫӗр-хӗвеланӑҫнелле ҫӗрте нимӗҫ пехотин пӗр роти пирӗн боевой охранение атакӑланӑ. Пирӗн 8 боец, Сараев лейтенант командир пулса ертсе пынипе, тӑшмана пулеметсемпе тата автоматсемпе пеме пуҫланӑ. Гитлеровецсен васкасах каялла чакмалла пулнӑ, ҫапӑҫу хирӗнче нимӗҫ салтакӗсен 30 вилли выртса юлнӑ.

* * *

Пирӗн авиаци Норвегин ҫурҫӗр сыранӗсем патӗнче тӑшман карапӗсене пырса ҫапнӑ. Ҫав тапӑнура пирӗн летчиксем нимӗҫсен 10.000 тонна таякан суднине тата хуралта ҫӳрекен карапне шыва путарнӑ. Тӑшманӑн ытти суднисене самаях вӑйлӑ сиенленӗ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 12 самолетне персе ӳкернӗ. Пирӗн 4 самолет пӗтнӗ.

* * *

Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флочӗн торпеда катерӗсем июнӗн 17-мӗшӗ ырӑн тенӗ чух ҫӗрле Финлянди сыранӗсем патӗнче тӑшман суднисен караванне курнӑ. Каравана сыхласа пыракан карапсен артиллерийӗ вӑйлӑ пеме пуҫланӑ пулин те, пирӗн катерсем тӑшман патне ҫывӑхарнӑ та каравана атакӑланӑ. Торпедӑсем ярса, тӑшманӑн пӗтӗмӗшпе 14.000 тонна таякан икӗ суднине тата хураласа пыракан тепӗр карапне шыва путарнӑ. Пулеметсемпе персе, тӑшманӑн хураласа пыракан 4 катерне вут тивертсе янӑ.

* * *

Сывлӑшри разведка Выборг заливӗнче тӑшман карапӗсене курнӑ. Вӗсене вара Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флочӗн авиацийӗ атакӑланӑ. Бомбӑсем пӑрахса штурмласа, финсен икӗ транспортне, хӑвӑрт ҫӳрекен десант баржине, пӗр тральщикне, буксирне, торпеда катерне тата 4 шлюпкине шыва путарнӑ.

* * *

Витебск облаҫӗнче кӗрешекен партизансен отрячӗ фронтала пыракан нимӗҫ обозне сасартӑк тапӑннӑ. Партизансем темиҫе вунӑ гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ, 142 автомат, 20 винтовка, 2 мотоцикл тата тӗрлӗ ҫар пурлӑхӗ тытса илнӗ.

* * *

Финсен 10-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчен Хӗрлӗ Ҫар енне куҫнӑ капрал Рейно М. ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Финсен Мустамяки — Кутерселькя районӗнчи оборонин иккӗмӗш линине икӗ ҫул ытла турӗҫ. 1942 ҫул пуҫламӗшӗнчен тытӑнса, Хельсинкирен, Тампереререн тата Выборгран ҫак районпа пӗр вӗҫӗмсӗр строительнӑй материалсем чугун ҫулпа кӳрсе тӑчӗҫ. Финляндири тӗрлӗ хуласемпе нумай ялсенчен ҫак строительствӑна мобилизациленӗ халӑх йышлӑн килсе тӑчӗ. Ку линие тума граждан халӑхне кӑна мар, резервра тӑракан ҫар чаҫӗсене те хутшӑнтарчӗҫ. Ҫапла кунӗн-ҫӗрӗн пӗр чарӑнмасӑр оборона сооруженийӗсем турӗҫ. Ҫак эпир икӗ ҫул хушши тунӑ, унтан пӗрмаях лайӑхлатса пынӑ оборонӑн хӑватлӑ линине халӗ вырӑс ҫарӗсем пӗр кун хушшинче татса кӗчӗҫ»

# А. М. МАТВЕЕВ юлташ доклачĕн вĕçĕ

пăхса тăрас, вĕсене плана палăртнă срокенче юсас ĕçе кулленхи ĕçĕн законĕ вырăнне шутлаççĕ. Асăннă МТС-сенче уйрăмăнах тракторсен вăйĕпе, уйрăм агрегатсемпе ĕçлес майпа усă курасси çине тимлĕн çавăрăнса пăхаççĕ. Ку вара горючие чылай перекетлеме пулăшать. Юлашкинчен, малта пыракан МТС-сем плана ăнăçлăн тултарас ĕçре политикăллă-массăллă ĕçе лайăх йĕркелени пысăк вырăн йышăнса тăнă.

Çавăн пек ĕç майĕсене пахаланнине пула, республикăри 5 МТС (Пăрачкав, Канаш, Улатăр, Шăмăршă, Куславкка) хăйсен çураки планĕсене тултараймарĕç. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн тата унăн производствăпа техника отделĕн кая юлса пыракан МТС-сене вăхăтра пулăшу памалла. Çав МТС-сене, чи малтанах, пур тракторсене те ĕçе кĕртме запаслă пайсем пырса пулăшмалла. Çавăн пекех квалификациллĕ рабочисем тупас енĕпе те пулăшас пулать. МТС директорĕсен, райсовет исполкомĕсен тата парти райкомĕсен МТС-сен ĕçĕсене тарăнăн тишкерсе, вĕсем мĕншĕн юлса пынине пĕлмелле, вĕсен ĕçне лайăхлатма татăклă мерăсем йышăнмалла.

## ÇĔРТМЕ ТĂВАССИ ТАТА ÇĔРТМЕ ПУССИСЕНЕ ПĂХСА ТĂРАССИ

Республикăри нумай колхозсем çуракине вĕçленĕ хыççăнах ирхи çĕртме тума тытăнчĕç. Ку питех те тĕрĕс, мĕншĕн тесен çĕртме сухине вăхăтра туни тухăçлă тырпул туса илмелли пĕрремĕш услови пулса тăрать. Партипе правительство çак ĕçе яланах пысăка хурса хаклаççĕ. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен планĕ çинчен йышăннă постановленире колхозсемпе совхозсене, МТС-сене тата çĕрĕç органĕсене таса çĕртме тумалли çĕр лаптăкне ÿстерме хушса хăварчĕç.

Анчах çĕртме тăвасси çине пур çĕрте те тивĕçлипе çавăрăнса пăхаççĕ теме пулать-и-ха? Ун пек калама çук. Нумай колхозсенче, иртнĕ çулсенчи пекех, çуракипе çĕртме хушшинче канмалли вăхăт пулмалла текен шухăшсене пĕтермен-ха. Вырăнти руководительсем иртнĕ çулсенче çĕртме тăвассине кая хăварни тырпул тухăçлăхне чакарасси патне илсе пынинчен тивĕçлĕ урок(с)ем туман пулас. Вĕсем иртнĕ çулта çĕртме сухине начар тунă пиркиех кăçал ыраш пуссинче 18.000 гектар ытла тепĕр хут пăсса акмалла пулни çинчен манса кайнă пулас. Çĕртме тăвас ĕç чылай районсенче, уйрăмăн илсен—Элĕк, Калинино, Советски, Сĕнтĕр, Вăрмар районĕсенче начар сарăлса пынине урăх нимĕнле те хаклама çук. Асăннă районсем çурхи тырăсене вăхăтра акса пĕтермерĕ, анчах ку тарана çитсе те çĕртме тума тивĕçлипе тытăнман-ха.

Çĕртме тăвас ĕçе халĕ пур çĕрте те анлăн сарса пымалла. Çак ĕçре МТС-сем пысăк вырăн йышăнмалла. Кашни МТС-ăн çĕртме тумалли плана срокра пурнăçа кĕртмелле. Анчах çĕртме сухине пĕтĕмпех МТС-сем тăвасси çине шанса тăни пысăк йăнăш пулнă пулĕччĕ. Çĕртме сухине туртăм вăйĕпе чылай тумалла. Пур колхозсен те халĕ, тракторсем пырасса кĕтмесĕрех, пĕтĕм туртăм вăйне çĕртме тунă çĕре куçармалла. Çĕртме тăвас ĕçе июлĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр вĕçлемелле. Çĕртме пуссине колхозсенчи тата колхозниксен килĕсенчи пĕтĕм тислĕке кăлармалла. Тислĕке чи малтан кĕркунне тулă акмалли участоксене тата тĕрлĕ культурăсем акнă çĕртме пуссине тăкмалла.

Çĕртме пахалăхне çуракинчи пекех çирĕппĕн тĕрĕслесе тăмалла. Тракторсемпе 18—20 сантиметр, лашапа 16—18 сантиметр тарăнăш сухаламалла та çийĕнчех сÿрелемелле. Таса çĕртмене пăхса усрас тени вăл ăна икĕ хутчен культиваци тăвассине е сÿрелессине пĕлтерет. Культурăсем акнă вырăнта çĕртме сухине вăхăтра тума клеверпа викăна иртерех пуçтарса кĕртмелле.

## ТЫРПУЛСЕНЕ ЛАЙĂХ ПĂХСА ÇИТĔНТЕРЕР

Чăваш республикинчи колхозсем, кăçал кирек мĕнле çанталăк пулсан та, тухăçлă тырпул туса илме сăмах пачĕç. Вĕсем хăйсен обязательствине ăнăçлăн пурнăçа кĕртме тытăнчĕç. Республикăри чылай колхозсем кăçал çĕре лайăхрах çемĕçтерчĕç, удобренисем нумай тăкрĕç. Çапла вара тухăçлă тырпул туса илмелли условисене хатĕрлесе хучĕç. Республикăра çурхи тырăсем лайăх шăтса тухрĕç. Халĕ ĕнтĕ çуракинчи çитĕнÿсене тырпулсене лайăх пăхса ÿстернипе çирĕплетсе хăвармалла. Ку ĕç, çураки пекех, хăвăрт, кая хăвармасăр тумалли ĕç пулса тăрать.

Республика хирĕсенче çумăрсем хыççăн çумкурăксем, уйрăмăнах анра-çарăк, армути тата хăях нумай ÿсрĕç. Апла пулин те пĕрчăллă тырăсене тата техникăллă культурăсене çумласси питех те сÿрĕк пырать-ха. Июнĕн 10-мĕшĕ тĕлне республикăра пĕтĕм акса хăварнă çĕр лаптăкĕнчен 17,2 процентне çеç çумланă. Çак сывăх вăхăтрах колхозсем çум çумлас ĕçе массăллăн йĕркелемесен, эпир тырпул сахалтарах туса илетпĕр.

Çум çумланă çĕрте ĕç пахалăхне тĕрĕслессине çирĕппĕн организацилемелле. Опыт çакна вĕрентет: акнă тырăсене çумкурăксенчен тасатас ĕçре уйрăмăн тата пĕчĕк ушкăнсемпе ĕçлессине организацилесен çеç çирĕп ответлăх тума пулать.

Техникăллă культурăсене — йĕтĕне, махоркăна, кантăра пăхса ÿстерес ĕçе звеносемпе тата уйрăмшарăн ĕçлесе çеç туса пымалла. Çакăн пек меслетпе ĕçлени лайăх пулнине малта пыракан колхозсен опычĕ çирĕплетсе парать.

Ялхуçалăх культурисене сиенлекен хурт-кăпшанкăсене хирĕç кĕрешес ĕç çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Çак ĕçе тунă çĕрте мĕнпур хатĕрсемпе тата химикатсемпе перекетлĕн усă курмалла. Хурт-кăпшанкăсене пĕтермелли имçамсем, химикатсем çителĕксĕр пулнине шута илсе, вырăнта ÿсекен йÿçкурăксемпе, кĕлпе тата ыттисемпе те вĕсене йÿçĕтсе е пĕçерсе йÿçĕ шывсем туса усă курмалла.

Улатăр, Элĕк, Йĕпреç, Канаш, Комсомольски, Хĕрлĕ Чутай тата ытти пăшпĕр районсем çĕрулми лартмалли плана тултараймарĕç. Çĕрулми лартмалли плана тултарманнине çĕрулмие тухăçлăн туса илнипе витмелле. Çавăн пек тăвас тесен, çĕрулмине куллен тимлĕн пăхса ÿстермелле, агротехникăн пур мероприятийĕсене те пурнăçа кĕртмелле. Пахча-çимĕçсене те çавăн пекех тĕплĕн пăхса ÿстермелле. Çĕрулмипе пахча-çимĕçсем, вĕсене шăварса ÿстерсен, тухăçлă пулаççĕ. Çавăнпа та вăл ĕçе кăçал пур колхозсенче те анлăн организацилемелле.

Чăваш АССР Совнаркомĕ пахча-çимĕçсене шăвармалли кашни район валли план çирĕплетсе пачĕ. Районсен руководителĕсен задачи — çав плана пĕтĕмпех пурнăça кĕртмелле тăвасси, çапла вара пахча-çимĕç культурисене тухăçлăн туса илесси пулать.

Часах акă пур çĕрте те утă çулма тата силос хывма тытăнмалла. Ку ыйтупа Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ ятарласа решени йышăнчĕç (Вăл кăçалхи июнĕн 13-мĕшĕнче республикăри хаçатсенче пичетленнĕ). Çав решенире общественнăй выльăх-чĕрлĕх валли апат-çимĕç базине тăвас тĕлĕшпе татăклă мероприятисем палăртнă. Çав кăтартусене пур колхозсенче те пĕтĕмпех пурнăçа кĕртмелле.

## ÇĔНĔ ТЫРПУЛА ПУХСА КĔРТМЕ БОЛЬШЕВИКЛА ХАТĔРЛЕНЕР

Ялхуçалăхĕнчи пĕтĕм ĕçсен хисепĕнче ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси палăрă вырăн йышăнса тăрать. Государствăна тырă памалли обязательствăна пурнăçа кĕртесси — колхозсен малтанхи задачи, пĕрремĕш тивĕçĕ пулса тăрать. Пирĕн республикăри колхозсем 1943 çулта государствăна тырă памалли тата МТС-сене натуроплата памалли плана срокчен тултарчĕç. Колхозсенчен чылайĕшĕсем МТС-сен 1944 çулхи ĕçĕшĕн аванс шучĕпе натуроплата тырри сахал мар пачĕç.

Пирĕн колхозсем çак ĕçе кăçал та, иртнĕ 1943 çулхи пекех, ăнăçлăн пурнăçа кĕртме, çапла вара государство умĕнчи парăма тата МТС-сене натуроплата парассине срокчен пурнăçа кĕртме пултарассĕ.

Ялхуçалăх продукчĕсем, техникăллă культурăсем, çĕрулмипе пахча-çимĕçсем хатĕрлес ĕçе ăнăçлăн ирттересси хатĕрлев аппарачĕсем тырпулсене йышăнма тĕплĕн хатĕрленнинчен нумай килет. Иртнĕ çулта, уйрăмах тырпул хатĕрлеме тытăннă малтанхи кунсенче, Заготзерпон уйрăм пункчĕсенче çавăрăнăçусăр ĕçленине пула тата техникăллă базăна, тарасасен хуçалăхне, лабораторисене тивĕçлипе хатĕрлемен пирки тырă тиесе пынă лавсене каялла таварса янисем те пулнă. Кăçал ун пек фактсем пулмалла мар.

Тырпул хатĕрлемелли кампани пуçланиччен уйăх çурă кăна юлчĕ. Анчах та хатĕрлев пункчĕсем çĕнĕ тырра йышăнма питех те япăх хатĕрленеççĕ. Заготзерпон чылай пункчĕсенче (Канашри, Шупашкарти, Етĕрнери, Çĕрпÿри) склад çурчĕсене, вĕсем япăх пулин те, юсама тытăнман. Çак ĕçе тума Торгвоздоовощьтрест системинче те пуçăнман-ха. Заготзерпон пĕр Вăрмарти пунчĕ кăна тырăсене йышăнма лайăх хатĕрленет. Вăл пунктăн управляющийĕ Блинов юлташ, ытти пунктсен руководителĕсем пек çÿлте тăракан организацисем пулăшассине кĕтсе тăмасăрах, районри организацисемпе пĕрле строительство материалĕсем те, çынсем те вырăнтах тупма пултарнă. Унта паянхи кун тĕлне склад çурчĕсене, тарасасен хуçалăхне тата лабораторине пĕтĕмпе тенĕ пекех юсаса çитернĕ. Вăрмарти пункт халĕ ĕнтĕ çĕнĕ тырра йышăнма пĕтĕмпе тенĕ пекех хатĕр.

Вăрмарти пунктăн опытне Заготзерпон ытти мĕнпур пункчĕсен йышăнмалла. Склад çурчĕсене, тарасасен хуçалăхне, складсем патне пымалли çулсене юсас ĕçе пур майсемпе те хăвăртлатмалла. Кашни пунктрах юсав ĕçĕсен графикне тумалла. Райсовет исполкомĕсен председателĕсем, парти райкомĕсен секретарĕсем Заготзерно пункчĕсене практикăллă пулăшу пама тивĕçлĕ.

Çавăнпа пĕрлех хатĕрлевпе суту-илÿ организаци руководителĕсен тырпул йышăннă çĕрте ĕçлеме кадрсем суйласа илес тĕлĕшпе халех татăклă мерăсем йышăнмалла. Вĕсене ĕçпе тĕплĕн паллаштармалла, тырпул йышăннă чухне кирлĕ пулакан документсене хатĕрлемелле, çапла вара тырпула малтанхи кунсенчех таттисыпписĕр йышăнса тăма, ăна тĕплĕн шута илме кирлĕ условисене пĕтĕмпех туса пумалла.

Кунта уйрăмăнах тырпулсене пуçтарса кĕртнĕ вăхăтра колхозниксене аванс тĕрĕс парасси çинчен чарăнса тăмалла. Ку ĕçре йĕркене пăснисем пачах та пулмалла мар. Авăн çапас ĕçе тырă вырма тухнă хыççăн 4—5 кунтан тытăнмалла, çапнă тырра çийĕнчех заготзерно пункчĕсене турттармалла тăвас пулать.

Тыра турттарма кашни колхозрах транспорт бригадисем тумалла: Çав бригадăсене камсене кĕртесси çинчен правлени [illegible]

[illegible]

мелле. Тырпулсене ăнăçлăн пуçтарса кĕртесси, чи малтанах, МТС-сенчи комбайнсемпе, машинăсемпе, алăпа ĕçлемелли инвентарьпе тĕрĕс те туллин усă курнинчен килет.

Пирĕн комбайнсене июлĕн 20-мĕшĕнчен кая юлмасăр пĕтĕмпех юсаса çитермелле. Анчах та вăл ĕç çителĕксĕр пырать. Июнĕн 10-мĕшĕ тĕлне комбайнсене юсамалли плана 9,1 процент çеç тултарнă. Нумай МТС-сем ку ĕçе пуçăнман та. Пĕр Красноармейски МТС-ĕ кăна ку енĕпе лайăх ĕçлет, вăл комбайнсем юсамалли плана 73 процент тултарнă ĕнтĕ. Йĕпреç, Комсомольски, Чкаловски, Канаш МТС-ĕсем те начар мар ĕçлеççĕ.

МТС директорĕсемпе район руководителĕсен комбайнсемпе тырпулсене пуçтарса кĕртмелли ытти машинăсене юсас ĕçĕн хăвăртлăхне татăклăнах ÿстермелле. Çакна тума кашни мастерскойра, ремонт тăвакан кашни заводра большевикла йĕркелĕх тумалла, ремонт ĕçĕнчи работниксем хушшинче социализмлă ăмăрту организацилемелле, çак ĕçри пахă майсемпе, уйрăмăн илсен, узловой методпа, анлăн усă курмалла.

Ремонт ĕçĕ час-часах запаслă пайсем пулман пирки тытăнса тăрать. Пирĕн республикăри уйрăм промышленность предприятийĕсем комбайнсемпе тракторсен деталĕсене тăвас тĕлĕшпе панă заказсене пурнăçласси питех те вăрăма тăсса пыраççĕ. МТС-сен заказĕсем çине çавăн пек ответлăхсăр пăхнине татăклăнах пĕтерес пулать. Çавăнпа пĕрлех МТС руководителĕсен ремонт ĕçĕнче хăйсен пуçарулăхне ÿстермелле, кивелнĕ запаслă пайсене юсас тата комбайнсемпе тракторсем валли çĕнĕрен запаслă пайсем тăвас ĕçре вырăнти майсемпе ытларах усă курас пулать.

Хăшпĕр районсенчен ремонт ĕçĕнче брак туни çинчен пĕлтереççĕ. Кая юлса пыракан МТС директорĕсем, маларах тухас шутпа, ремонт пахалăхĕ чакни умĕнче те чарăнса тăмаççĕ. Ку вăл сиенлĕ ĕç.

Ремонтран юсаса çитермесĕр кăларнă комбайн вăл — юсанă комбайн мар. Ун пек юсанă комбайнсене сводкăна кĕртни— государствăна улталани пулать. Комбайнсене ремонтран кăларнă хыççăн тĕрĕслесе йышăнас тĕлĕшпе тунă районсенчи государство комиссийĕсен тивĕçĕ — кашни машинăна тĕплĕн тĕрĕслесси пулать.

Кашни комбайн çумĕнчех улăм пухмалли тата ÿкнĕ тырра, вире, хуратула, вăрăх тумалли курăксене вырмалли хатĕрсем пулмалла. Комбайнсене техника тĕлĕшĕнчен лайăх пăхса усрама кашни 15—20 комбайн валли автомашинăсем е урапасем çинче мастерскойсем туса хатĕрлемелле.

МТС-семпе совхозсен директорĕсен, комбайнсене тухăçлăн ĕçлеттерес шутпа, уборка ĕçĕсем пуçланиччĕнех комбайнсемпе вырмалли участоксене суйласа илмелле, вĕсемпе комбайнерсене паллаштармалла. Комбайнсем валли маршрутсем туса хатĕрлемелле.

Пирĕн республикăра тырпул пуçтарса кĕртнĕ çĕрте лаша кÿлсе ĕçлемелли машинăсем тата алăпа ĕçлемелли инвентарьсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Пирĕн лаша кÿлсе ĕçлемелли машинăсемпе тата алăпа вырса пĕтĕм акнă тырă хисепĕнчен 90 процент таран пуçтарса кĕртмелле. Анчах та колхозсемпе районсен руководителĕсем çав машинăсемпе инвентарьсене юсас тĕлĕшпе кирлĕ пек тăрăшмаççĕ, вĕсене мĕнле юсанине вырăнсенче никам та тĕрĕслемест. Çавна пула вара уборка машинисене мĕнле юсани ĕçе тухсан çеç курăнать. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ кăçал çакăн пек йĕрке турĕç: тырпулсем пуçтарса кĕмелли машинăсене, вĕсене юсанă хыççăн, комиссисем йышăнмалла. Çав комиссисен составĕнче райсовет исполкомĕн представителĕ, колхоз председателĕ тата инвентаре çирĕплетсе панă уйхир бригадин бригадирĕ пулмалла.

Вăхăта вăраха ямасăр, мĕнпур тимĕрçĕсене тата машинăсене пĕлекен çынсене машинăсем юсанă çĕре тăратмалла. Кирлĕ запаслă пайсене шыраса тупса, пĕтĕм машинăсене июлĕн 20-мĕшĕнчен кая юлмасăр хатĕрлесе çитермелле. Çавăнпа пĕрлех алăпа ĕçлемелли инвентаре — çавасемпе çурласене юсассипе те организацилемелле.

Иртнĕ çулта нумай колхозсенче косилкăсемпе лобогрейкăсем, вĕсем çинче ĕçлеме çынсем пулман пирки, ахаль ларнă. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ пире колхозниксене, совхозсенчи рабочисене, производствăран татăлмасăр, лашапа ĕçлемелли машинăсем — жнейкăсем, лобогрейкăсем, молотилкăсем çинче ĕçлеме вĕрентсе хатĕрлеме хушрĕç. Рай-

[illegible]

тăм вăйне вырнаçтарса тухас ыйтусем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Малтанах кашни колхозра, МТС-па совхозра тырпулсене пуçтарса кĕртмелли плана тĕплĕн шутласа тăвас пулать. Унта ĕçсене пĕр вăхăтра мĕнле туса пымаллине, колхозсемпе МТС-сенчи мĕнпур уборка машинисемпе тĕрĕс усă курмаллине, çавăн пекех лашасемпе, тракторсемпе мĕнле ĕçлемеллине палăртмалла.

Кашни колхозникăн, звенон, бригадăн, шкул ачисен отрячĕн тата тырпулсене пухса кĕртме хуласенчен, район центрĕсенчен мобилизациленĕ çынсăн хăй ăçта ĕçлемеллине тата кашни кун мĕн чухлĕ ĕçлемеллине малтанах пĕлсе тăмалла. Колхозсенчи ертсе пыракан аппарата май килнĕ таранах чакармалла, уйхирте ĕçлекен колхозниксен хисепне ÿстермелле. Уборка вăхăтĕнче кашни колхозрах — ача ясли, ача площадки, колхозниксем валли — общественнăй столовăй организацилемелле.

Иртнĕ çулхи практика çакна кăтартса пачĕ: ăçта ĕçе уйрăм сдельщина йĕркипе организациленĕ, ăçта кашни лаптăк çинчи ĕçе уйрăмăн шута илнĕ, ăçта кашни колхозникех тырă вырса пуçтарнă çĕрте кулленхи нормăран кая мар участок уйăрса панă, çавăнта тырпул пухса кĕртес ĕç ăнăçлă иртнĕ, çавăнта ĕç нормине тултараймасан колхозниксем пулман, тăкаксемпе кĕрешессине лайăхрах йĕркеленĕ.

Чылай чухне тăкаксемпе кĕрешес ыйтăва манаççĕ. Халех кашни колхознике çакăн çинчен ăнлантарса памалла: кашни çухатнă пучах ĕçкунĕ хакне чакарать. Иртнĕ çулхи тĕслĕхсене илсе кăтартса, тырпулсене пухса кĕртнĕ чухне тăкак туни мĕн чухлĕ сиен кÿни çинчен колхозниксене ăнлантарса парас пулать. Кашни комбайн, жнейка, лобогрейка çумнех зерноуловитель туса хумалла. Кĕлте кÿмелли урапасене лайăх хуп сармалла. Капансене лайăх тасатнă итемсем çине анчах тумалла. Тăкăннă тырра итем çинчен кашни кунах шăлса илмелле. Комбайнпа тырă вырнă чухне çиелтен кастарса пымалла мар. Комбайнпа вырнă чухне хăмăлăн çÿллĕшĕ 15 сантиметртан вăрăм пулмалла мар, жнейкăсемпе вырнă чухне 10 сантиметртан ытла пулмалла мар. Тырă вырма е çавапа çулма тухакан кашни çыннăнах хăйпе пĕрле кĕрепле илсе тухмалла, тăкăланчăка хăйĕннех пуçтарса пымалла.

СССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ хăйсен постановленийĕсенче пире çулсеренех çакăн çинчен кăтартса параççĕ: тырă вырма тухнă хыççăн 3—5-мĕш кунсенчех авăн çапма тытăнас пулать, кĕлте турттарас ĕçе тырă вырса пĕтернĕ хыççăн 10 кунран кая юлмасăр вĕçлемелле. Çак правилăна çирĕппĕн пурнăçласа пымалла.

Кăçал пирĕн тырпулсене хураллас ĕçре иртнĕ çул пулнă çитменлĕхсене тĕплĕн шута илмелле. Уйхирсене хураллас ĕçе вăйлатмалла, пĕр пучах тырра та хапрампыр ан вăрлайтăр. Çакна тăвас тесен, хуралçăсем пулма тÿрĕ кăмăллă, шанчăклă колхозниксене уйăрмалла, уйхире сыхлакансем валли каланчасем, сăнамалли пунктсем тумалла, çапла вара тырпула вырса кĕме пуçличченех кунĕн-çĕрĕн сыхламалла. Çĕмелсем тунă вăхăтра кашни участокри çĕмелсене шута илсе тухмалла. Тырпула уйрăмах итемсенче тата комбайнсем патĕнче тимлĕн сыхламалла. Итем çине тырă хăварас пулмасть, турттарса пĕтермесĕр ĕçрен кĕмелле мар. Тырра тĕплĕн шута илсе пымалла, амбара йышăннă чухне те, итем çинчен тиесе янă чухне те турттармалла. Çакăнпа пĕрлех уйхирте те, итем çинче те пушара хирĕçле мероприятисене пурнăçа кĕртмелле.

Мари тата Мордва республикисемпе социализмлă ăмăртăва хутшăнса, Чăваш республикинчи колхозниксем кăçал кирек мĕнле çанталăк тăрсан та вăйлă тухăçлă тырпул туса илме пулчĕç. Çуракине ăнăçлăн ирттерсе, пирĕн колхозниксем вăйлă тырпул никĕсне хыврĕç. Вăйлă тырпулшăн малалла пыракан кĕрешÿри ăнăçлăха халĕ ĕнтĕ колхоз хресченĕсем сывăх кунсемпе эрнесенче хăйсен уйхирĕсенче пĕтĕм вăя хурса, çине тăрса ĕçлени татса парать.

Колхоз уйхирĕсенчи хĕрÿ ĕçпе, тырпулсене пухса кĕртме вăхăтра хатĕрленнипе, тырпулсене пухса кĕртес ĕçе вăхăтра туса ирттернипе, государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçланипе орденлă Чăваш республикинчи колхоз хресченĕсем нимĕç захватчикĕсене çапса аркатас ĕçре Тăван çĕршывпа [illegible] Хĕрлĕ Çара [illegible] пулăшĕç.

# Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

## Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, июнĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн паян ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла калать:

«Союзниксен çарĕсем çаплах наступлени туса пынă. Вĕсен малта пыракан чаçĕсем Сен-Совёрта тăраççĕ. Комонпа Тилли-Сюр-Сель хушшинчи районра тăшман вăйлă хирĕç тăнă пулин те, союзниксен çарĕсем унта кăшт малалла куçнă. Июнĕн 16-мĕшĕнче кун-каçах союзниксен крейсерĕсемпе эсминецĕсем тăшманăн Орн шывĕн хĕвелтухăç сыранĕнчи батарейисене тата Кан хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пĕр çĕре пуханă пухăнна тăнă танкĕсене пенĕ. Транспортсен караванĕсем Франци сыранĕ патне таттисыпписĕр тата пĕр çухатусăрах пырса тăраççĕ.

Çанталăк начар тăни июнĕн 16-мĕшĕнче кăнтăрлапа каçхине авиацие кĕрешме кансĕрленĕ.

* * *

ЛОНДОН, июнĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн паян каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Союзниксен çарĕсем Нормандие тата шалалла кĕнĕ. Тилли-Сюр-Сель хулинчен хĕвелтухăçнерехрипе хĕвеланăçнерехри ялсене тăшмантан тасатнă. Изиньи хулинчен 2 миля кăнтăралла куçса, пирĕн çарсем Вир шывĕне Тот шывне пĕрлештерекен канал патне çитнĕ. Котантен çурутравĕ çинче Сен-Совер-ле-Виконт хулине йышăннă.

Тул çутăлса килнĕ вăхăтран пуçласа кăнтăрла çитиччен союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем нумай чакнă, мĕншĕн тесен çапăçусем пыракан районра çанталăк начар тăнă.

Кăнтăрла иртсенех йывăр бомбардировщиксен чылай пысăк соединенийĕсем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, тăшманăн кăнтăр Нормандири 7 аэродромне тапăннă. Истребительсен ытти соединенийĕсем Сомма каналĕ çинчи чугун çул кĕперне пĕтерсе тăкнă.

Июнĕн 17-мĕшĕнче ирхине ирех çыранри авиацин самолечĕсем тăшманăн Ла-Маншри суднисене атакăланă.

* * *

ЛОНДОН, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн паян ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Союзниксен çарĕсем Сен-Совер-ле-Виконт районĕнче çĕнĕрен хĕвеланăçнелле куçнă. Тилли-Сюр-Сель тата Кан секторĕсенче çаплах тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă. Июнĕн 17-мĕшĕнче каçхине çанталăк лайăхланнă та союзниксен авиацийĕ хăйĕн тактикăллă операцийĕсене анлăн тума пуçланă. Тăшман сывлăшра хытă хирĕç тăрса çапăçман. Кăнтăрлахи йывăр бомбардировщиксем тăшманăн Тур тата Нант районĕсенчи 5 аэродромне тата самолетсем лармалли площадкисене пырса çапнă. Пирĕн вăтам тата йывăр бомбардировщиксем Буа-Дю-Омм хулинчи (Комон хулинчен кăнтăртарахра) тата Сен[illegible] Ла Луп хули (Шартере хулинчен хĕвеланăçнерехре) хушшинчи горючи склачĕсене пырса тапăннă. Вăтам бомбардировщиксен ытти соединенийĕсем Мезидонри чугун çул станцийĕсем çине, çавăн пекех тата Ле Мерлерс хулипе Сен-Любэн хули хушшинчи чугун çул çине (вăл Парижпа Гранвиль хули хушшинче 65 километр тăршшĕ участокра) бомбăсем пăрахнă. Истребитель-бомбардировщиксен соединенийĕ Çурçĕр Францири нумай çар объекчĕсене атакăланă. Июнĕн 18-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле çăмăл бомбардировщиксем тăшман çулйĕрĕсене нумай пунктсенче атакăланă.

* * *

ЛОНДОН, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн паян каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвĕнче çапла каланă:

«Союзниксен çарĕсем Котантен çурутравне Нормандин тĕп пайĕнчен татса илнĕ, союзниксен çарĕсем Варневиль-Сюр-Мер сывăхĕнче Котантен çурутравĕн хĕвеланăç хĕррине тухнă. Фронтăн вăтаçĕрти участокĕнче пирĕн çарсем Вир шывĕнчен хĕвелтухăçнелле куçса пыраççĕ, Сен-Ло хули патне çитесси 6 миля кăна юлнă.

Хальхи вăхăтра тыткăна илнĕ нимĕç салтакĕсен шучĕ 15.000 çынтан та иртсе кайнă.

Фронт участокĕсен нумайĕшĕн районĕнче çанталăк каллех пăсăлса кайрĕ, çавăн пирки июнĕн 18-мĕшĕнчи кăнтăрла çитиччен пирĕн авиаци вăйлă çапăçма пултарайман. Июнĕн 18-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн тинĕс çумĕнчи укрепленисене сыхлакан истребительсем тăшманăн 10 самолетне пĕтерсе тăкнă.

Июнĕн 18-мĕшĕнче ирхине вăтам тата çăмăл бомбардировщиксем Ренн хулинчи чугун çул деповне ăнăçлă тапăннă. Çавăн пекех тата Домфрон хулинчен хĕвелтухăçнерехри Дандэн вăрманĕнчи объектсем çине, тăшман тылĕнчи ытти вăрçă тата транспорт объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

## Америка çарĕсем Котантен çурутравĕн хĕвеланăç хĕррине тухнă

ЛОНДОН, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин американецсен Нормандири çарĕсемпе пĕрле пыракан специальнăй корреспонденчĕ Стрингер çапла çырать: союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен хирти штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Америка çарĕсем Котантен çурутравне татса пăрахнă. Штаб пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: американецсен 9-мĕш дивизийĕн чаçĕсем Котантен çурутравĕн хĕвеланăç хĕррине тухнă, вĕсем тунă коридор сарлакăшĕ 10—11 километра çитет. Малтан çурутравăн вăтам пайĕнче 48 сехет хушши наступлени тунă, вара çакăн хыççăн асăннă дивизи чаçĕсем, хĕвеланăçнелле савăлланса кĕрсе, çурутравăн хĕррине тухнă. Çав чаçсем тинĕс хĕррине Картре сăмсахĕпе Барневилль районĕнче тухнă. Çапла вĕсем çурутрав çинчи нимĕç çарĕсене татса илнĕ, çав çарсем халĕ михĕре тăрса юлнă. Çак операци Шербур портне кăна мар, Котантен çурутравĕн пĕтĕм çурçĕр секторне те Францирен уйăрса янă. Котантен çурутравĕн татса илнĕ çурçĕр пайĕнче Шербура хÿтĕлеме нимĕçсем тĕрлĕ япаласемпе снаряжени нумай хатĕрлесе хунă пулĕ тесе шухăшлаççĕ.

## Эйзенхауэр штабĕ француз партизанĕсен ĕçĕсем çинчен пĕлтерни

ЛОНДОН, июнĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ хăйне уйрăм пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă. Çав пĕлтерÿре çапла каланă: июнĕн 6-мĕшĕнчен пуçласа французсен Францири çарĕн хисепĕ тата унăн ĕçĕсен анлăшĕ ÿснĕ. Çав çар саботажпа диверссисем тумалли анлă плана пурнăçа кĕртме пуçланă. Уйрăмăн илсе кăтартсан, çав план тăрăх чугун çулсемпе тата шоссе çулĕсемпе çÿрессине, çавăн пекех тата телеграфпа телефон тăрăх çыхăнассине чарса лартмалла. Çак ĕç нумай чухне ăнăçлă иртнĕ. Нумай кĕпере çĕмĕрнĕ, поездсене крушени тунă, сахалтан та 70 паровоза юрăхсăра кăларнă.

«Çак сапотажла ĕçсем, союзниксен ĕçĕсемпе килĕштерсе тунăскерсем, Германи резервĕсене çапăçусем пыракан района илсе пыма чылай кансĕрленĕ. Партизансем тата тăшмана хирĕç тÿрремĕнех те кĕрешме пуçланă. Илнĕ хыпарсем тăрăх, партизансем 300 çынна тыткăна илнĕ. Германи гарнизонĕсене атакăланă. Хăшпĕр районсенче ялсене йышăнса илнĕ. Чылай тĕлте урамсенче çапăçнă. Партизансем тăшманпа вăйлă çапăçаççĕ. Французсен Францири çарĕ хăшпĕр районсене хăй контрольлесе тăрать. Союзниксем Франци çыранĕнче тунă ĕçсен пĕрремĕш эрни пĕтнĕ чухне французсен Францири вăйĕсем Франци ирĕке кăларас тĕлĕшпе хăйсен ĕçне тунă».

## Берлин, Вена тата Братислава хулисем çине бомбăсем пăрахни

ЛОНДОН, июнĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: ĕнер союзниксен Вăтаçĕр тинĕсри сывлăш çар вăйĕсен шутне кĕрекен йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем Вена (Австри) тата Братислава (Чехословаки) районĕнчи нефть тасатакан заводсене тапăннă. Бомбăсем пăрахасси ăнăçлă иртнĕ. Тăшманăн çав заводсене тапăнма кансĕрленĕ нумай самолетне персе ÿкернĕ.

Çав кунах кăнтăрла американецсен йывăр бомбардировщикĕсем Па-де-Кале районĕнчи вăрçă объекчĕсене тапăннă.

Июнĕн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен питĕ пысăк соединенийĕсем Берлина, Штеркраде хулине тата тăшман оккупациленĕ территорисене атакăланă.

Халĕ паллă пулнă тăрăх, Англи бомбардировщикĕсем Гавр хулине юлашки хутĕнче тапăннă чухне Германин тинĕс-çар вăйĕсене пысăк çухатусем тÿстернĕ. Портра тăнă мĕнпур торпеда катерĕсене тата ишсе çÿрекен дока шыва путарнă. Причалсем патĕнчи çуртсене питĕ пысăк сиен тунă. Тинĕс вокзалĕн территорийĕнче пур çуртсене те сирпĕнтерсе янă.

ЛОНДОН, июнĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: ĕнер Германи авиацийĕ Англи çинче иртнĕ каçхинчен сахалтарах кĕрешнĕ. Вăл тапăннине пула кăнтăр Англири хăшпĕр пунктсенче вилнисемпе аманнисем пур тата унта пурлăха сиенленĕ.

## АНГЛИ БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ ГЕРМАНИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, июнĕн 18-мĕшĕ (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтернĕ: июнĕн 18-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Çурçĕр Францири вăрçă сооруженийĕсене тапăннă. «Москито» йышши бомбардировщиксен соединенийĕ Берлинри тата Хĕвеланăç Германири объектсене атакăланă.

## Германири тата Голландири нефть тасатакан заводсене тапăнни

ЛОНДОН, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Европăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: июнĕн 18-мĕшĕнче американецсен 8-мĕш авиаци корпусĕнче тăракан «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» йышши 1.300 самолечĕ çурçĕр-хĕвеланăç Германири нефть тасатакан темиçе заводпа виçĕ аэродрома тата Голландири нефть тасатакан завода тапăннă. Çав шутра Гамбургри нефть тасатакан заводсемпе нефтехранилищĕсене те тапăннă.

## ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ТĂШМАНПА — ГЕРМАНИ ТЕРРИТОРИЙĔНЧЕ ВĂРÇМА ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Шведсен «Афтонтиднинген» хаçачĕ пичетлесе кăларнă хыпарсем тăрăх, гитлеровецсем вăрçă чăннипех те Германи территорине пырса кĕресрен шикленсе, хăйсем патĕнче вăрçма хатĕрленме тытăннă. Хаçат çапла çырать: Германи влаçĕсем ятарласа инструкцисем кăларнă. Çав инструкцисенче вĕсем союзниксен çарĕсем Германи территорине кĕме тытăнсан вырăнти влаçсен мĕн-мĕн тумаллине кăтартса панă. Сăмахран каласан, çавăн пек инструкцисем Эмден, Ольденбург, Бремен хулисен влаçĕсене панă.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

«Чăваш Коммуни» издательствине уборщицăсем, бухгалтер тата хут склачĕн заведующийĕ кирлĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, Пичет çурчĕ, 3-мĕш хут, 28-мĕш пÿлĕм. Телефон № 0—23

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпа секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.
НТ. 00200 Типография №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.